Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

12 (7973) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 15-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

«Тавар туянакан кăмăллă пултăр»

Çулталăк ĕçне пĕтĕмлетнĕ май

Çулталăка хыçа хăварнă май кашни организаци, учреждени ку таранччен мĕн пурнăçланине пĕтĕмлетет, çавăн пекех малашне вăя кĕртмелли пирки тĕллев лартать. Ĕç кăтартăвĕ çулран çул ӳссе пыни вара татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Февралĕн 9-мĕшĕнче Муркаш райпо канашĕн иртнĕ çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕ пулчĕ. Кунти ĕç-хĕлпе тĕплĕнрех паллаштарма эпĕ канаш ертӳçипе Б. АНДРЕЕВПА калаçу урттертĕм.

– Борис Васильевич, иртнĕ çула хăвăр ĕç тĕлĕшĕнчен мĕнле хак панă пулăттăр? Коллектив кăмăлне тивĕçтерчĕ-и хыçа юлнă тапхăр е пăшăрхантаракканни ытларах тĕл пулчĕ сирĕн ĕçре?

– Кирек епле организацишĕн те тĕп тĕллев ĕç пахалăхне, кăтартăвне ӳстересси, конкурентлăха тытса тăрасси, çавăн пекех кунта вăй хуракан тата потребитель кăмăлне туллин тивĕçтересси пулса тăрать. Çакна тĕпе хурса умри тĕллеве вăя кĕртни халиччен ĕçленин тĕп кăтартăвĕ пулса тăрать. Эпĕ шутланă тăрăх пирĕн райпо канашĕн кăтартăвĕ япăххисен шутĕнче мар.

Райпо ĕçĕн тĕп юхăмĕ – суту-илӳ ĕçĕ. Çак ен пирĕн ĕçре тĕп шăнăр пулнă май иртнĕ çулхи тавар çаврăнăшне 106,3 процента çити ӳстерме пултартăмăр.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

«Çынсен йышне 154 миллиона çитермелле»

В. Путин статйипе паллашатпăр

Раççей Президентне суйлама кандидата тăратнă Владимир Путин премьер-министрăн черетлĕ прграмма статйи тунти кун «Комсомольская правда» хаçатра пичетленсе тухрĕ. Автор унта уйрăм мерăсем пурнăçа кĕртни Раççейре пурăнакансен йышне çывăх çулсенче 154 миллиона çитерме май парĕ тесе палăртать.

Хăйĕн статйине премьер «Тĕрĕслĕх строительстви. Раççей валли хатĕрленĕ социаллă политика» тесе ят панă. Унта Правительство пуçлăхĕ ку сферăри проблемăсене уçăмлатать, хăйĕн шухăшĕпе вĕсене эффективлă татса памалли çулйĕре палăртать. «Раççей – социаллă патшалăх, – тет вăл. – Ытти патшалăхсемпе танлаштарсан унăн социаллă гарантийĕсен шайĕ те çӳллĕрех. Анчах та çынсем хальхи лару-тăрупа килĕшсе пурăнасшăн мар». Çакă тĕрĕсех тесе палăртать премьер.

Раççейăн социаллă политикин тĕп проблеми – ресурссен калăпăшĕ те мар. Ку вăл туса урттерекен ĕçсен эффективлăхĕ тата вĕсем тĕллевлĕ пулни. Çитес вăхăтрах лару-тăрава улăштарас пулать, йышăнакан мерăсен тĕллевлĕхĕ малти вырăна тухать.

Патшалăх паракан тӳлевсемпе тата çăмăллăхсемпе çемьесен 60 проценчĕ усă курать. Пенсисен виçине ӳстерсех пыраççĕ. Анчах та В. Путин шучĕпе малти вырăнта ачаллă çемьесене пулăшу парасси пулмалла. Нумай ачаллă çемьесем виççĕмĕш ача çуралнипе çыхăннă малтанхи тапхăрти чухăнлăх чиккине ăнăçлă çĕнтерме пултарччăр. Ачаллă амăшĕсене ĕçпе тивĕçтересси те кунта пĕлтерĕшлĕ.

Демографи лару-тăрăвĕ япăх регионсенче премьер çемьере виççĕмĕш тата хыççăнхи ачасем çуралсан вĕсем 3 çул тултариччен ятарлă пособи тӳлеме сĕнет. «Конкретлă ку вăл уйăхне татах 7 пин тенкĕ хушма укçа парĕ», – палăртнă статьяра. Тепĕр 4 çул хушшинче ача сачĕсенчи черетсене пĕтермелле.

Путин шухăшĕпе пенсие тухмалли вăхăта ӳстерме кирлĕ мар. Анчах та пенсие тухсан та ĕçлес, çапла майпа хăйсен пенси виçине ӳстерес текенсене çавна валли майсем туса памалла.

Статьяра палăртнă тăрăх вăтам класс валли пачах çĕнĕ пенси политики кирлĕ. Чи малтанах ку вăл пенси системин пухăнакан мелне аталантарасси.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

Пурнăç условийĕсем лайăхланаççĕ

Çурт-йĕрпе тивĕçтересси

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ, çĕр-шыв Правительстви çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас, вĕсене пурăнма кирлĕ йĕркеллĕ майсем туса парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени куç кĕрет. Юлашки çулсенче кăна сахал мар вăрçă участникĕпе вăрçă хирĕнче вилнисен тăлăх арăмĕ, ялсенче тĕпленсе пурăнма тытăнакан çамрăк çемьепе çамрăк специалист хваттерлĕ пулчĕ, патшалăх пулăшăвĕпе усă курса хăйсен уйрăм çурт-йĕрне çавăрчĕ. Ку тĕлĕшпе Федераци шайĕнче тĕрлĕ саккунсем йышăннă, ятарлă тĕллевлĕ программăсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Паянхи сăмах – «Ветхое и аварийное жилье» Федераллă программа районта мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен. Ун пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В. НИКИТИН каласа пама пулчĕ:

– Асăннă Федераллă программăна 2007 çулта йышăннă. Вăл 2008–2012 çулсем валли. Унпа килĕшӳллĕн Федераци шайĕнчен уйăракан укçа-тенкĕпе усă курса кивелсе çитнĕ, усă курма, пурăнма юрăхсăра тухнă нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансене çĕнĕ çуртсем çĕклесе унта пурăнма куçарма, майлăрах çуртсенче вара капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă.

Ку программăна пурнăçа кĕртессипе япăх мар ĕçлесе пынине палăртмалла. 2009 çулта ытларах эпир нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерессипе, çынсене йĕркеллĕ пурăнма кирлĕ условисем туса парассипе ĕçлерĕмĕр. Çав çул Муркашра, Мăн Сĕнтĕрте тата Москакассинче нумай хваттерлĕ 10 çурт тĕпрен юсама май килчĕ. Ытларах чухне юсав ĕçĕсем çуртсен çийĕсене юсаса улăштарассипе, путвалсенче, подъездсенче тĕрлĕ ĕçсем пурнăçлассипе, шыв пăрăхĕсене улăштарассипе çыхăннă.

2010 çулта вара пурăнма юрăхсăр 11 çурт пăсрăмăр. Каллех кунта Муркаш, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр ялĕсене асăнмалла. Çапла вара пĕтĕмпе 44 хваттерте пурăнакан 143 çынна çĕнĕ çуртсенче хваттерсемпе тивĕçтернĕ.

Иртнĕ çул та çӳлте асăннă программăпа пăхнă ĕçсене сахал мар пурнăçларăмăр. Муркашра нумай хваттерлĕ 3 çурт, Мăн Сĕнтĕрте 1 çурт, Москакассинче 4 çурт тĕпрен юсама май килчĕ.

Çавна та каласа хăварас пулать. Çав ĕçсене туса ирттерме каякан укçа-тенкĕне пур чухне те тархасшăн илĕр тесе алăран тыттармаççĕ. Юлашки вăхăтра пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче пулса иртнĕ улшăнусем, реформа ĕçĕсем те çавăнпа çыхăнман мар.

Кăçал та кивелсе çитнĕ юрăхсăр çуртсенче пурăнакансен пурнăç условийĕсене лайăхлатас ĕçсем чарăнса ларманнăçĕ темелле. Черетре – Мăн Сĕнтĕрте 2 хутлă 3 çурт тата Муркашра 2 хутлă 1 çурт. Вĕсене пăсма, хваттерсенче пурăнакансене вара çĕнĕ çуртсенче хăтлă хваттерсемпе тивĕçтерме палăртатпăр.

Асăннă программăна 2008–2012 çулсем валли йышăннă терĕмĕр. Анчах та çак ĕçсем кăçалхи çулпа чарăнса ларма кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен пурăнма юрăхсăр нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансене çурт-йĕрпе тивĕçтерессин программине 2016 çулччен тăсма, ку тĕлĕшпе тепĕр программа йышăнма палăртаççĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Дмитрий Медведев ку енĕпе туса ирттермелли мероприятисен паланне хатĕрлеме министрсене хушу панă ĕнтĕ.

Çынсене пурăнма кирлĕ условисем туса парас, юрăхсăра тухнă нумай хваттерлĕ çуртсенчен çĕнĕ хваттерсене куçарас енĕпе йышăннă программăна пурнăçа кĕртме уйăракан укçа-тенкĕ тĕллевлĕ шутланать. Унпа урăх тĕллевпе усă курма май çук.

В. ШАПОШНИКОВ
каласнă.

«Раççей – яланлăха!»

Çак ятпа Республика тĕп хулинче пурăнакансемпе хăнасем 5 пин çынна яхăн февралĕн 11-мĕшĕнче Хĕрлĕ тӳремре Раççей историйĕн çулталăкне халалласа ирттерекен патриотла акция хутшăннă. Ку акция пирĕн районти чăн-чăн патриотсем те хутшăнма кăмăл тунă. Хăйсен гражданла позицине палăртма 50 ытла яшкĕрĕм Шупашкара тухса кайнă.

Раççей Геройĕ, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант, Леонид Якубович телеведущи, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ Анатолий Игумнов, РФ тата ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Раççей тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Аркадий Айдак тата ыттисем хăйсен сăмахĕнче çавна палăртнă. Раççей – аслă та хăватлă çĕр-шыв. Унăн историйĕ пуян. Унăн пуласлăхĕ, малашлăхĕ – пирĕн алăра.

Коммуналлă услугăсен хакĕсен ыйтăвĕсемпе

Чăваш Республикин Прокуратурипе республика Культура министерствин пуçарăвĕпе çак кунсенче республикăри пур районсенче те «Коммуналлă услугăсем памалли çĕнĕ йĕркесем» темăпа право сехечĕ ирттереççĕ. Асăннă мероприятие пирĕн районта Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра февралĕн 16-мĕшĕнче йĕркелеме пăхнă. Право сехечĕ 15 сехетре пуçланать.

Граждансене коммуналлă услугăсем памалли, нумай хваттерлĕ çуртсене тытса тăмалли тата юсамалли çĕнĕ йĕркесем пирки район прокуратурин ĕçченĕсем, райадминистраци ертӳçисемпе специалисчĕсем, ертсе пыракан компани ĕçченĕсем ăнлантарса парĕç.

Тĕп вырăнта – АПК

Раççейри кашни тăваттăмĕш çын ялта пурăнать. Чăваш Республикинче пурăнакансен 40 проценчĕ ялта пропискăра тăрать. Çавăнпа та агропромышленность комплексне аталантарасси – стратегиллĕ ыйту. Иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулĕсен вĕçĕнче апат-çимĕç продукчĕсем тĕлĕшпе дефицит пулнă-тăк, паян апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕ шухăшлаттармасть. Патшалăх пулăшăвĕпе анлăн усă курса хресчен юлашки çулсенче ытларах тырă-пулă, çĕр улми, сĕт, аш-какай туса илме пуçларĕ. Агробизнес çав-çавах тĕпсĕр çырма пулса юлать-и? Мĕн тумаллаха РФ тата ЧР Правительствисен ял хуçалăх отраслĕ аталанса чечеклентĕр тесе? Çак ыйтусене хускатĕç «Тĕп вырăнта» программа циклĕсен черетлĕ кăларăмĕнче нарăс уйăхĕн 19-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра «Раççей 24» информаци каналĕ çинче.

Турра ĕненекенсене пĕлме

Муркаш çĕрĕ çинче – Святойсен çĕрмен ӳчĕсем

Варнава митрополит пил тунипе пирĕн района февралĕн 15-мĕшĕнче Мир Ликийăри хăватлă ĕçсем тăвакан святой Николай аттен тата Мускаври телейлĕ пулнă Матрона аннемĕрĕн çĕрмен учĕсен пайĕсене (мощи) илсе килеççĕ.

Святойсен çĕрмен ӳчĕсем Муркаш районĕнчи чиркӳсенче çак кунсенче пулаççĕ:

Муркашра: февралĕн 15-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа февралĕн 19-мĕшĕнчи 11 сехетчен;

Очăкассинче: февралĕн 19-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа февралĕн 19-мĕшĕнчи 19 сехетчен;

Уйкас Янасалта: февралĕн 19-мĕшĕнче 20 сехетрен пуçласа февралĕн 21-мĕшĕнчи 11 сехетчен;

Йӳçкассинче: февралĕн 21-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа февралĕн 22-мĕшĕнчи 11 сехетчен;

Мăн Хураçкара: февралĕн 22-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа февралĕн 24-мĕшĕнчи 11 сехетчен.

Сывлăх

Чирлессинчен асăрханăр

Республикăри «Роспотребнадзор» пĕлтернĕ тăрăх иртнĕ эрне вĕçне Чăваш Енре ОРВИ чирĕпе чирленĕ 6 пин ытла тĕслĕх регистрациленĕ.

Пирĕн районта ОРВИ-пе чирлесси эпидеми шайне çиттмен. Пĕлтĕр январьте çынсем çак инфекци чирĕпе кăçалхи январь уйăхĕпе танлаштарсан 2,2 хут ытларах чирленĕ пулнă. Иртнĕ çулталăкăн пĕрремĕш уйăхĕнче 466 тĕслĕх (100 пин çын пуçне 1278,5) регистрациленĕ пулсан, кăçал – 215 тĕслĕх (100 пин çын пуçне 614,5).

Районта ОРВИ чирĕпе чирлессин мониторингне кашни эрнерех ирттеретпĕр. Çапла февраль пуçламăшĕнче ачасемпе аслисен ӳсĕмĕнче те ОРВИ-пе чирлесси ӳсме тытăнни палăрать. Чирлессинчен асăрханăр.

Г. СОКОЛОВА,
Муркашри тĕп больницăри эпидемиолог врач.

«Çĕр-шыва сыхлакана пулăшмаллах»

Паян – интернационалист-салтаксен астăвăм кунĕ

Раççей пурнăçĕ улшăнусен çулĕ çине çирĕп тăнă май пирĕн ертӳçĕсем Тăван çĕр-шыва сыхлакансем тата çак ĕçре пулăшакансем тĕлĕшпе те тимлĕх ытларах уйăрма пуçларĕç. Çакă çамрăк ăрăва патриотизмла воспитани парас ĕçре – пысăк пулăшу.

...Чикĕ пăсакансем пуç çĕклерĕç, хăлха патĕнченех пульăсем шăхăрса иртрĕç. «Çук, Раççей сире валли мар», – тесе Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнă Коля пулемета ĕçлеттерсе ячĕ...

Çак ўкерчĕк пирĕн ентеш Раççей Геройĕ Николай Смирнов интернационалист-салтак 1994 çулхи çурла уйăхĕнче Тăван çĕр-шыв чиккине хўтĕлесе йышăннă юлашки çапăçуран.

– Тăван çĕр-шыва хўтĕлекенсене пирĕн кашнин вăй ситнĕ чухлĕ пулăшмалла. Çĕр-шыв вăй-хăвачĕ – пирĕн пĕрлĕхре, – терĕ Муркаш райпо канашĕн ертўçи Б. Андреев интернационалист-салтаксен районти обществăлла пĕрлешĕвĕн ертўçи В. Киршев «Активлă гражданла позицишĕн тата патриотизмшăн» обществăлла медаль çакса янă хыççăнхи кĕске каласура.

Обществăлла организацисем тенĕрен, Чăваш Республикин пуçлăхĕ М. Игнатьев та вĕсен пĕлтерĕшне пысăка хурса хаклать: «Обществăлла организацисем – пирĕн чи сывăх та шанчăклă пулăшакансем. Вĕсем çынсен конституципе пăхнă прависене хўтĕлессипе, çамрăксене патриотизмла воспитани парассипе, коррупциллĕ ĕç-хĕлпе кĕрешес ĕçре пирĕншĕн шанчăклă тĕкĕ пулса тăраççĕ. Çак çыхăнăва çирĕплетсен çеç эпир малалла çирĕп утăмсем тума пултаратпăр».

Интернационалист-салтаксен астăвăм кунĕ пулнă май кĕскен сăртлăтуллă инçетри Афганистан çĕр-шывĕнче 1981-1983 çулсенче пулнă Вячеслав Евсеевич Киршев пирки. Паян Москакассинче пурăнакан арçын Шупашкарта çуралса ўснĕ. 1981 çулхи кĕркунне призыв йĕркипе действительнăй çар службине кайсан чăваш каччи Афганистана лекет. Спортпа туслă Вячеслава разведчиксен подразделенине илеççĕ.

– Çамрăклăхра хама хам вăрçă вут-çулăмне лекĕп тесе шутламан. Анчах шăпа çавăн пек çаврăнса тухрĕ. Пирĕн çарсем вăл е ку операцие хатĕрленме пуçласан малтан разведчиксен çула тухма тиветчĕ. Палламан вырăнсем, сивĕ сăрт-ту хысакĕсем... Душмансем вара унта хăйсене килти пек туятчĕç. Çавăнпа пире йывăрччĕ, анчах пĕр çар заданине те пурнăçламасăр хăварман, – тет пĕр рейд операцийĕнче йывăр аманнă В. Киршев.

Вячеслав Евсеевич çартан таврăнсан Шупашкарти милици шкулĕнчен вĕренсе тухса хăйĕн пĕтĕм ĕç ĕмĕрне Шалти ĕçсен министерствипе çыхăнтарать. Çак вăхăтра Нагорный Карабахра взвод командирĕ пулса командировкăра та пулать. 2000 çултанпа В. Киршев – тивĕçлĕ канура. Юлашки çулсенче пирĕн ентеш интернационалист-салтаксен районти обществăлла пĕрлешĕвне ертсе пырать, çамрăксене патриотизмла воспитани парассипе пысăк ĕç туса ирттерет.

– Çамрăксене тивĕçлĕ воспитани парасси пĕр-икĕ çын ĕçĕ мар. Çавăнпа та пире ку енĕпе пулăшакансене эпир те тимлĕхсĕр хăвармастпăр, – терĕ воин интернационалист Муркаш райпо канашĕн ертўçин аллине чăмăртанă май **(сăн ўкерчĕкре).**

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

Чыса эс тивĕç, «шурави»!

Афган паттăрĕсене – чĕррисене те, пуç хунисене те – ĕмĕрех асра тытса.

Тăван килтен пит инçетре,
Афганистан çĕр-шывĕнче,
Эс курнă вăрçă ахрăмне,
Ас тивнĕ унăн тутине.
Çулсем иртсен те сан чунран
Ăсран тухмасть Афганистан.
Куç умĕнчех хура сăртсем,
Хаяр тăшман, тытăçусем...
Кабул, Панджшер, Джелалабад –
Ăçта пулсан та автомат
Алра сан пулнă яланах.
Унпа çĕнтернĕ тăшмана.
Сана паян та, «шурави»,
Кĕлеткўри тăшман пульли
Афган çинчен ас илтерет,
Хурлантарать, çўçентерет.
Епле эс манăн юлташна,
Салтак çăкри пĕр çинине.
Тăван килне цинк тупăкпа
Чунпа йĕрсе ăсатнине.
Уявсене эс тăхăнсан
Кăвак берет кăшт пăлханса.
Кăкру çине пĕрер çакан
Медальсене мăнаçланса.
Хаклатăн мирлĕ пурнăçа,
Сивлетĕн пит хăруш вăрçа.
Хăв курнăран ун ахрăмне,
Ас тивнĕрен ун тутине.

Игорь МАЙКОВ.

Кашмаш ялĕ.

Юбилей

Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан **Мария Степановнăпа Михаил Егорович ИВАНОВСЕНЕ** пĕрлешнĕренпе 55 çул çитнĕ ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кунçул сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сире тата нумай-нумай çул усратăр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрўшĕ, мăнукĕсем çемйисемпе, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.

Чи хаклă та юратнă аннене, кукамая, асаннене, ырă кăмăллă тăвана – Муркаш салинче пурăнакан **Галина Петровна ГОРДЕЕВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире пурне те парнеленĕшĕн, яланах пире ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕшĕн. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрўшĕ, кинĕ, икĕ мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.



Пирĕншĕн чи хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана, мамака, тăхлачăна – Муркашра пурăнакан **Нина Павловна САЗОНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр.

Çĕр çул таран чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр
Пире савăнтарса пурăнсамччĕ эс татах.
Эпир сана чун-чĕререн саватпăр,
Тавах сана, пуриншĕн те тавах!

Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.

Чи хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, аппана, кукамая, асаннене, хисеплĕ тăвана – Атапай ялĕнче пурăнакан **Вера Михайловна БЛИНОВĂНА** 65 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн тухакан ăшă та çепĕç салам яратпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хăват, сўнми телей, тулăх пурнăç, вăрăм кун-çул сунатпăр. «Тавах сана, аннем, ўстернĕшĕн, лăпканăшăн, çын тунăшăн», – тетпĕр. Эпир сана пурте юрататпăр!

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрўшĕсем, 11 мăнукĕ, тăхлачипе хăти, йăмăкĕсемпе шăллĕсем çемйисемпе, тăван-хурăнташĕсем.

Пирĕн юратнă мăшăра, аннене, асаннене, хисеплĕ тăвана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Алексеевна ДАНИЛОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана нумай-нумай çул усратăр.

Саламп: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕпе кĕрўшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.

«Тавар туянакан кăмăллă пултăр»

Çулталăк ĕçне пĕтĕмлетнĕ май

– Тавар çаврăнăш ўсĕмне эсир потребитель йышĕ хăпарнипе çыхăнтаратăр е ...

– Кăтарту ўсĕмĕ тавар туянассипе кăна çыхăнман. Çакăнта суту-илĕвĕн çĕнĕ точкисене уçни те пысăк вырăн йышăнать. Паянхи потребитель эпир кивĕлле ĕçленине ытла килĕштермест. Çапла вара суту-илў ĕçĕнче çĕнĕлле тата çĕнĕ йышши пысăк пахалăхлă оборудованипе ĕçлеме тивет. Çапла пулмалла та, потребителĕн ыйтмалла – пирĕн тивĕçтермелле. Пурлăхпа техника базине çирĕплетме пĕтĕмпе 31 миллион та 078 пин тенкĕ уйăрнă.

Райпо тытăмĕнчи суту-илў точкисене çĕнетес ыйту яланах тĕп вырăнта тăрать. Халăхăн йышлă ыйтăвне тĕпе хурса Муркаш салинче самообслуживани мелĕпе ĕçлекен «Волна» лавкка **(сутуçисем 1-мĕш страницăри сăн ўкерчĕкре)** уçрăмăр. Çавăн пекех «Суту-илў центрĕн» склад пўлĕмĕсене реконструкцилесе суту лаптăкне пысăклатрăмăр, çавна май тавар ассортиментне пуянлатрăмăр. Ярапайкассинчи лавккара хушма уйрăм уçрăмăр. «Парковый» лавккана та çĕнĕ сăнсăпат кĕртрĕмĕр.

Ялсенче çурт-йĕр çĕнетесси йышлансах пырать, унпа пĕрлех ку тĕлĕшри тĕрлĕ материал туянасси те. Çурт-йĕр çĕклес текенсем ыйтнине кура ялсенчи лавккасене строительство материалĕсем чылай кўрсе паратпăр. Çак материалсемпе ытларах суту-илў тăвакан сутуçăсене хавхалантарма ятарлă конкурс ирттеретпĕр. Çавна май «Стройхозтовары» лавкка тавар çаврăнăшĕ 40 процент чухлĕ ўсрĕ. Кирек епле ĕçре те пĕр-пĕрне ăнланса, хавхалантарса ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ вĕт. Сĕтел-пукан продукцине сутасси 3,5 миллион тенкĕне çити ўсрĕ. Ку енĕпе те ялсенчи лавкка сутуçисене явăçтаратпăр. Вĕсем урлă 315 пин тенкĕлĕх шкаф, пукан, комод сутнă. Ĕçе çапла йĕркелени тавар туянаканшăн та питĕ меллĕ, мĕншĕн тесен кашни çын автомашина тытса аякка тухаймасть вĕт. Çавăнпа та потребителĕн тĕрлĕ тавар кўрсе килме ыйтма именмелле мар. Хушма хуçалăх тытакансем валли комбикорм, тырă хывăхĕ тата хутăшĕ 416 тонна 2 миллион та 668 пин тенкĕлĕх сутнă.

Халĕ чылай лавкка самообслуживани мелĕпе ĕçлет. Ĕçе çапла майпа йĕркеленине халăх хапăл туса йышăнать. Кирлĕ йышши тавара çывăха тытса, пахаласа тата кирлĕ виçепе суйласа илме пулать. Çакă сутуçă ĕçне те хăвăртлатать, туянакан вăхăчĕ те самай перекетленет. Ку мел çине куçни тавар çаврăнăш ўсмĕ çине пысăк витĕм кўчĕ. Çитес вăхăтра çак ĕçе Кашмаш, Ваçкасси, Çатракасси, Уйкас Турай лавккисенче йĕркелеме палăртнă. Юлашки вăхăтра Муркаш салинчи «Суту-илў центрĕ» лавккара тавар туянакансен йышĕ палăрмаллах ўсрĕ. Халăха мĕнле тавар кирлĕ – кунта йăлтах пур. Пысăк пахалăхлă тавар ассортименчĕ тăтăш улшăнса, пуянланса тăрать. Халăх ыйтăвне туллин тивĕçтерни ўсĕм кăтартăвне 150 процента çитерчĕ.

Юлашки тапхăрта Чăваш Республикинче туса кăларнă пысăк пахалăхлă, экологи тĕлĕшĕнчен таса прдукципе ытларах ĕçлетпĕр, çакă та тавар туянакана пирĕн пата илĕртет. Акă Етĕрнери аш-пăш комбиначĕн, «Акконд» фирмăн, Муркашри чăх-чĕп фабрикин, Элĕк райповĕн пахча-çимĕç, «Кооператор» ООО производство комбиначĕсен, «Чебоксарский бройлер» фирмăн пысăк пахалăхлă апат-çимĕçне пурте яланах хапăл тăвать. Паллах, хамăр патра туса илнĕ апат-çимĕçе, сĕтел-пукана, трикотаж изделине, атă-пушмака тата ыттине ют тăрăхран кўрсе килнипе танлаштараймăн.

Хамăр пекарня, обществăлла апатлану предприятийĕсенче хатĕрленĕ продукци пĕтĕм тавар калăпăшĕн 9 процентне йышăнать. Суту-илў предприятийĕсенче 26 миллион та 57 пин тенкĕлĕх сутăннă çăкăр-булка изделийĕ – райпо хатĕрленĕ продукци. Хальлĕхе райпо тата уйрăм çын лавккисем пачах çук ялсем те пур-ха, унта вара аякка тухса çўреймен ватă çынсем те сахал мар. Çавна май Платкасси ялне эрнере икĕ хутчен Шаптак лавккинче ĕçлекенсем автолавккапа тухаççĕ, халăх ыйтнă тавара тивĕçтереççĕ. Ĕçе çапла майпа йĕркелени лавкка тавар çаврăнăшне 12 процент чухлĕ ўстерчĕ.

– Сирĕн аптека ĕçĕ-хĕлĕ ырă сăмаха тивĕç, унта кирек хăш вăхăтра та кирлĕ эмел туянма, тĕрлĕ консультаци илме пулать. Хакĕ те ытти аптекăрисемпе танлаштарсан йўнĕрех. Çакă та, паллах, тавар туянакана илĕртет.

– Çак ĕçе эпир çулсерен лайăхлатса пыратпăр. Унти тавар калăпăшĕ сутлăхри пĕтĕм таварăн 2,8 процентне йышăнать. Çитес вăхăтра ку ĕçе татах та анлăлатма, медицина тата ветеринари аптекисене уçма палăртнă.

– Юлашки çулсенче обществăлла апатлану предприятийĕсемпе халăх ытларах усă курма пуçларĕ. Хăшĕ унта апатланма, кану вăхăчĕ ирттерме, тепри тĕрлĕ уяв паллă тума кафе-столовăйсене çул тытать.

– Çапла, эпир çак туртăма хамăр ĕçре аван туятпăр. Вăйра тăракан обществăлла апатлану предприятийĕсем çителĕкĕсĕррине шута илсе, Итали интерьерне тĕпе хурса, 35 çын вырнаçмалăх «Бриз» кафе-пиццери уçрăмăр. Кунта кирек хăçан та тĕрлĕ пицца тутанма пулать. Çавăн пекех кăмăл пулсан тутлă çимĕçе вырăна та çитерсе параççĕ. Хăш чухне вара унта лекме те йывăртарах – кирек хăçан та халăх йышлă. Ярославкăри «Ярославна» кафене те çынсем кăмăлларççĕ. Июль уйăхĕнчен пуçласа вăл хăй ĕçне çĕнетрĕ, çапла вара унта пысăк калăпăшлă 56 мероприяти ирттерчĕç. Эпир çултанçул ăнăçлăрах ĕçлеме тĕллев лартнă вĕт. Çавăнпа та мĕн пурнăçланипе çырлахмастпăр, çак çулта 150 çын вырнаçмалăх обществăлла апатлану объектне тăвас ĕçе пуçăнма тĕллев лартрăмăр.

– Ял çыннин тĕп тупăшĕ – хушма хуçалăх. Хуçалăхра туса илнĕ продукцие вара вăхăтра вырнаçтармалла. Унсăрăн пахалăх тата тупăш чакать.

– Райпо лавккисем халăхран хушма хуçалăхра туса илнĕ тĕрлĕ продукци йышăнаççĕ. Çавăн пекех 62 лавкка макулатура, çăм, тир тата ыттине пухать. Çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те йышăнăвăн 50 пункчĕ халăхран сĕт пухать. Йышăну ĕçĕ валли тивĕçлĕ оборудовани, автотранспорт, специалист çителĕклĕ. Вăрманкассинчи йышăну пункчĕ (Е. Алексеева заведующи) халăхран 174 тонна та 500 килограмм сĕт пухнă. Торинкассинчи Т. Абрамова 12 тонна та 170 килограмм 122 пин те 65 тенкĕлĕх сĕт панă. Ялсенчен сĕт турттарас ĕçре Г. Тодинов водитель ырăпа палăрнă, 733 тонна сĕт турттарнă. Халăхран пĕтĕм-пе 42 миллион та 257 пин тенкĕлĕх аш пуçтарнă. Обществăлла апатлану предприятийĕсене О. Николаев предприниматель 11 пин тонна та 600 килограмм чухлĕ ашпа тивĕçтерчĕ.

Паянхи куна райпо производстви 6 цеха пĕрлештерет. Ĕçĕн ытларах турттăмĕ – çăкăр-булка изделийĕ янтăласси, çавна май çак продукцие 27 миллион тенкĕлĕх ăсатнă. Çĕвĕ цехĕ 1 миллион та 900 пин тенкĕлĕх продукци хатĕрлесе кăларнă. Продукцие хатĕрлессинче патшалăх стандартне тĕпе хурса ĕçлетпĕр.

– Сирĕн тытăмра миçе çын вăй хурать, ĕç укçи калăпăшĕ тивĕçтерет-и кунта ĕçлекене?

– Паянхи кун тĕлне пирĕн коллектив тăват çĕре яхăн çынна пĕрлештерсе тăрать. Çак йыша ĕç укçи тўлеме 65 миллион та 026 тенкĕ уйăрнă.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
каласнă.

Ял хуçалăхĕ йывăрлăхра пĕччен мар



Патшалăх пулăшăвĕ

Юлашки çулсенче çут çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсенче те ял çынни пĕччен юлмарĕ. Патшалăх пулăшăвĕ ку вăхăтра кашниншĕнех палăрăмлă та курăмлă пулчĕ. Пулса тухнă лару-тăрăва тивĕçлипе хак парса Раççей Федерацийĕн Правительствипе Чăваш Республикин Правительстви хресчене пулăшу алли тăсса парасси ырă йăлана кĕчĕ. Вăхăтлă тата вырăнлă пулăшу ял хуçалăх ĕçченĕсене выльăх йышне сыхласа хăварма, перспективлă ял хуçалăх культурисем акса-лартса ӳстерме, çĕнĕ харпăрлăх формисене аталанма май парать.

Çӳлерех илсе кăтартнă диаграммăра районти çĕр ĕçченĕсем патшалăх пулăшăвне мĕн чухлĕ илнипе (пин тенкĕпе) тĕплĕнрех паллашма май пур.

В. Путин статйипе паллашатпăр

«Çынсен йышне 154 миллиона çитермелле»

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Студентсен стипендине премьер уйăхне 5 пин тенкĕне çитермелле тесе шухăшлать. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнсах патшалăх аслă вĕренӳ заведенийĕсен преподавателĕсен ĕç укçине регионти вăтам виçепе танлаштармалла, 2013–2018 çулсенче вара профессорсемпе преподавательсен ĕç укçи шайне регион экономикинчи вăтам виçерен 2 хут пысăклатмалла. Тухтăрсен шалăвĕ пирки те çавнах каламалла.

Премьер пуçарăвĕ – рабочи аристократине çĕнĕрен йĕркелесси. 2020 çул тĕлне вĕсен шучĕ квалификациллĕ мĕн пур ĕçченсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ пулмалла.

Çынсене çурт-йĕрпе тивĕçтерессин ыйтăвĕ çинче чарăнса тăнă май В. Путин çавна палăртать. Çурт-йĕр тăвассинче коррупци витĕмĕнчен тата бюрократи схеминчен хăпмалла. Ку программа çурт-йĕр хакне 20 процентран кая мар, хăш-пĕр çĕрте вара 30 процент таран та чакарма май парĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх инфраструктури чылай ыйту çуратать. Коммуналлă услугăсен хакĕсем ӳссех пыраççĕ.

Миграци шайĕ çулталăкне вăтамран 300 пин çынпа танлашмалла. Чи малтанах вара яланлăх пурăнма Раççее хамăр ентешсене явăçтармалла.

Путин шанать, енчен те çынсен йышне сыхласа хăварассин стратегине пурнăçа кĕртме май килсен, 2050 çул тĕлне Раççейре пурăнакансен шучĕ 154 миллион çынна çитмелле. Нимĕн те тумасан, çак ĕçе хăй еккипе ярсан вара çав вăхăт тĕлнех çĕр-шывра хальхи 142 миллион вырăнне 107 миллион çын кăна юлĕ.

«Новости» Раççей информаци агентстви.

Газ служби яваплăх ыйтать

Районăн маттур çыннисем

Пирĕн районта çут çанталăк газĕпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлакан тĕп организаци – «Чувашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ. Район çыннисем юлашки çулсенче çут çанталăк газĕпе усă курассине пурнăçра тĕп вырăна кăларчĕç пулсан, вĕсен ку ĕçре сиксе тухакан ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси те – пĕлтерĕшлĕ пулăм.

– Ĕçĕ нумай, анчах пурнăç малалла аталаннине йывăрлăх теес килмест. Ĕçĕмĕр пĕтĕмĕшле ял пурнăçне лайăхлатассипе çыхăнни пире çанă тавăрсах ĕçлеттерет. Раççей тата Чăваш Президенчĕсемпе Правительствисем яла аталантарассипе малашлăхшăн йышăннă программăсене пурнăçа кĕртессине эпир хамăр тивĕç тесе шутлатпăр, хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех вăхăтра та пахалăхлă тума тăрăшатпăр, – теççĕ «Моргаушимежрайгаз» филиалта ĕç хăрушсăрлăхĕн инженерĕнче ĕçлекен Юрий Алексеевич Николаев, аварипе диспетчер службин аслă мастерĕ Владимир Ильич Колбасов тата аварипе диспетчер службин слесарĕ Александр Аркадьевич Порфирьев (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла).

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Эрехпе иртĕхни ырри патне илсе çитермест

Следствии пайĕнчен

Çакна пĕлмен çын çук та ĕнтĕ, ăна тĕрлĕ тĕслĕхсем çирĕплетеççĕ. Апла пулин те кĕленчене пушатмасăр алăран вĕçертменнисем сахалланса пымаççĕ-ха. Çак кунсенче РФ Следствии комитечĕн Чăваш Республики тăрăх следствии управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следствии пайĕ маларах пирĕн районта пулса иртнĕ хăш-пĕр преступленисене уçăмлатса пачĕ. Вĕсене тишкерсен каллех эрех ĕçни тĕп вырăна тухать.

Акă декабрĕн 4-мĕшĕнче Çĕн Чемей ялĕнче пулса иртнĕ преступлени. Эрех ĕçнĕ арçын каçалапа хăйĕнпе пĕрле пурăнакан хĕрарăмпа хирĕçсе каять. Хăйне алăра тытма пултарайманскер хĕрарăмăн мăйĕ патне çĕçĕ тытса вĕлерессипе хăратать. Хĕрарăм вара, хăйĕн пурнăçĕшĕн хăраса, арçынна чарас тесе, çĕççе хăй аллине туртса илет, арçынна темиçе хутченех чикет. Сурансене чăтайманнипе арçын çавăнтах вилсе каять. Следствии арçын ӳсĕр пулнăран хĕрарăма вĕлерме е унăн сывлăхне йывăр сиен кӳме пултарайманнине тĕпчесе палăртать. Çапла майпа Уголовлă кодексăн 108 статйин 1 пайĕнче çырса кăтартнă преступление тунине çирĕплетсе парать.

Тепĕр тĕслĕхĕнче те – эрех ĕçнĕ арçын. Ку вара декабрĕн 31-мĕшĕнче ирхи икĕ сехет тĕлĕнче влаç представителĕ çине (вăл ĕçре пулнă вăхăтра) çакна пĕлсе тăрсах алă çĕклет. Унччен ытти çынсем умĕнчех пакунлă çыннăн ят-сумне тата чысне пăсакан сăмахсемпе перкелешет. Следствии ӳсĕр арçын Уголовлă кодексăн 318 статйин 1 пайĕнче тата 319 статйинче çырса кăтартнă преступление тунине çирĕплетсе парать.

Виççĕмĕш тĕслĕхĕнче – эрех çын пурнăçне вăхăтсăр татать. Эрех ĕçсе наркăмăшланнăран Муркашри тĕп больницăна Çатракасси ял тăрăхĕнчи пĕр арçынна илсе пынă пулнă. Анчах та врачсем темĕнле тăрăшсан та вăл январĕн 7-мĕшĕнче вилсе каять. Сывлăхĕ хытах хавшанă пулнă: эрехпе наркăмăшланнă кăна мар, çаварĕ те, апат пырĕ те пиçсе кайнă. Унăн кӳрши каланă тăрăх больницăна илсе кайиччен арçын 5–6 кунах ӳсĕр çӳренĕ мĕн. Пĕр кун вара ӳсĕр арçын юр çинче вырт нине курсан кӳрши васкавлă пулăшу чĕннĕ: арçын хырăм хытă ыратнине пĕлтернĕ пулнă.

Етĕрнери районсем хушшинчи следствии пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

РФ Президенчĕн суйлавĕ умĕн

Çĕнĕ экономика çĕнĕ варкăш кĕртĕ

Ял çыннине хуçалăхра тĕрлĕ пулăшу кирлĕ: картиш çĕрĕшнĕ – улăштармалла, мунча кăмаки кивелнĕ – çĕннине тумалла тата ытти те. Тимĕртен ăсталанă япалапа вара чылай вăхăт усă курма пулать. Çапла эпĕ пуриншĕн те усăллă ĕç вăя кĕртес тесе тĕллев лартрăм, «Металлстрой» ООО йĕркелерĕм. Хамăн вăй-хăват çителĕксĕр пулчĕ. Çак ĕçе тулли вăйхăватпа пурнăçлама патшалăх пулăшăвĕ питĕ вăхăтлă пулчĕ. Хамăр ĕç-хĕл пирки бизнес-план хатĕрлерĕмĕр, ăнăçлă хӳтĕлерĕмĕр. Çапла вара патшалăх уйăракан 300 пин тенкĕ грант çĕнсе илтĕм. Эпĕ, предприниматель пулнă май, хама бизнес субъекчĕн пĕр тытăмне кĕртетĕп. Çавăнпа та Владимир Путинăн: «Пире çĕнĕ экономика кирлĕ» статйине уйрăмах тĕплĕн тишкертĕм. Çакăнта вăл экономика сферипе çыхăннă пĕтĕм ĕç-хĕле уçăмлатнă. Пире тĕрĕс çулпа илсе каяс текен çын çĕр-шыв аталанăвĕн çул-йĕрне аван курать, ума тĕллев лартать, халичченхи йăнăш утăма вара çивĕччĕн критиклет.

Унăн уйрăмах çак шухăшне палăртса хăварас килет. «Бизнес, уйрăммăн илсен, пĕчĕкки тата вăтамми, çĕнĕ майсене хăвартрах пурнăçа кĕртет; çак майсем информатытăм, чи малтан çулсен сечĕ, аталаннăçемĕн тупăнаççĕ. Анчах ăна хальхи условисенче патшалăх çеç йĕркелеме пултарать, çав шутрах – уйрăм çын бизнесĕ хутшăннипе те». Вăл пĕчĕк тата вăтам бизнеса йĕркелекенте пысăк малашлăх курать. Апла пулсан малашне те çак субъект тимлĕхре, тĕп вырăнта пулĕ.

Пирĕн ĕç-хĕле тĕрĕслекен орган чылай, хăш чухне вара çакă кулленхи ĕçре чăрмав та кӳрет. Ку тĕлĕшпе В. Путин акă мĕн каланă: «Бизнес ĕç-хĕлне патшалăх енчен тĕрĕслесе тăрассин мĕн пур идеологине улăштармалла, çак функцисене сахаллатмалла. Çĕнĕ стратеги бизнесăн тӳрĕ кăмăллăх презумпцийĕ çинче никĕсленмелле – таса чунлă предпринимательсене ĕçлеме, ыттисен киревсĕр хăтланăвĕсенчен хăтăлма лайăх условисем туса памалла». Пĕтĕмĕшле илсен унăн шухăш-кăмăлĕ – йăлт тухăçлă пурăнас текен çын интересĕсене хӳтĕлессишĕн, çĕршыв ăнăçлăхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн.

Çапах та пирĕн малашлăх çитсе килекен суйлавпа тачă çыхăннă, апла пулсан малашлăхшăнах пурте пĕр саслăн пулар.

А. ЕРШОВ,
«Металл-строй» ООО ертӳçи.

Паллă тĕпчевçĕ тата пултаруллă куçаруçă

(Ф.Т. Тимофеев (Тимухха Хĕветĕрĕ) çуралнăранпа 125 çул çитнĕ май)

Чăваш Республикин патшалăх кĕнеке палатинче чĕлхе тĕпчевçин 23 кĕнеки, унăн кун-çулĕ çинчен çырнă паха материалсем тирпейлĕн упранаççĕ.

Ф.Т. Тимофеев 1887 çулта нарăсăн 16-мĕшĕнче Хусан кĕпĕрнинчи Етĕрне уесĕнчи (хальхи Муркаш районĕ) Якаткасси ялĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Малтан Турай ялĕнчи пуçламăш шкулта, унтан Элĕкри икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. 1903-мĕш çулта Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Тăрăшуллă, пысăк ĕмĕтлĕ çамрăк 1909 çулта чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă, халăх учителĕ ятне илсе 16 çул хушши тĕрлĕ шкулсенче учитель пулса ĕçленĕ. Ĕçленĕ хушăрах халăх юрри-сăввисене, халапĕсене пухса Н.И. Ашмарин профессор патне яра-яра панă.

«Чĕлхе – халăх пурнăçĕ, халăх шухăшĕ, халăх философийĕ. Эпир хамăр чĕлхене мĕн чул аван пĕлетпĕр, çавăн чухлĕ халăх пурнăçне те пĕлетпĕр», – тенĕ Тимухха Хĕветĕрĕ.

Унăн пĕрремĕш кĕнеки «Наглядно-переводный метод ведения разговорных уроков по русскому языку в инородческих училищах» ятлă. Вăл 1918 çулта Хусанта кун çути курнă. Ку кĕнекере чĕлхеçĕ Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсен шкулĕсенче вырăс чĕлхи вĕрентмелли меслетсем çинчен çырса кăтартнă.

Паллă тĕпчевçĕн ĕçĕ иртнĕ ĕмĕрхи 20–30-мĕш çулсенче анлă сарăлнă. 1921 çулта вăл «Несколько слов о чувашской школе» брошюра пичетлесе кăларнă. Унта тăван чĕлхен халăха вĕрентес ĕçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен учительсен съезчĕсемпе конференцийĕсенче каланă шухăшĕсене пĕтĕмлетнĕ.

1924 çулта Ф.Т. Тимофеев вĕрентекенсем валли «Чăваш чĕлхин грамматики» ятлă кĕнеке хатĕрлесе кăларнă. Кĕнеке часах саланса пĕтнĕ, ăна тепĕр 4 çултан, 1928 çулта, иккĕмĕш хут пичетлесе кăларнă.

Каярах тĕпчевçĕ «Чăваш чĕлхине вĕренмелли кĕнеке» (1–2-мĕш, 3–4-мĕш, 5–мĕш, 6–7-мĕш классем валли) хатĕрленĕ.

1922–1925 çулсенче чĕлхеçĕ Чĕмпĕрти педтехникумпа ял хуçалăх техникумĕнче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ. Кунта вăл Н.Я. Марр академикпа паллашнă, ăна чăвашла вĕренме пулăшнă. Академик чăваш чĕлхи учительне хăй патне аспирантурăна вĕренме илнĕ. 1925 çулта 38 çул тултарнă чĕлхеçĕ аспирант пулса тăнă. Аспирантурăри Тимухха Хĕветĕрĕ тутар, монгол, мари, авалхи грузи чĕлхисемпе лекцисем итленĕ, чĕлхе наукин историйĕпе паллашнă. Аспирантурăран Тимухха Хĕветĕрĕ пысăк тĕпчевçĕ пулса шкула тавраннă, аслă шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентме тытăннă. 1930-мĕш çулта Ф.Т. Тимофеевăн харăсах икĕ кĕнеке пичетленсе тухнă: пĕри «Материалы по преподаванию русской грамматики в нацменских школах», тепри – «Чăваш чĕлхине вĕрентмелли методика».

Шкул учебникĕсемсĕр пуçне пирĕн паллă ăсчах вĕрентӳ программисене, чăваш чĕлхин орфографийĕпе пунктуаци правилисене хатĕрлес ĕçе туллин хутшăннă, литературăна вырăсларан чăвашла нумай куçарнă, çĕнĕ самана ыйтнине пурне те туса пыма тăрăшнă.

Е. АРЛАНОВА,
ЧР патшалăх кĕнеке палатин пай пуçлăхĕ.

«Сивёре – пурте çёнтерўçёсем»

Вырсарни кун, Раççейри ытти кётессенчи пекех, Муркашра та «Раççей йёлтёр йёрё – 2012» масстартсем иртрёç, унпа пёрлех – Социализмла Ёç Геройне Е. Андреева халаллана ăмăрту та. Муркашсен вара хăйне май рекорд пулчё: стадионта – шартлама сивёрен хăраман йёлтёр сырнă 500 ытла çын! Район пуçлăхё И. Николаев, район администрацийён пуçлăхё Р. Тимофеев тата ытти ертўçёсемпе хăнасем стартченех вёсене пурне те çёнтерўçёсем тени тёрёс пулчё.

Ăмăртăва йёркелекенсем сивёне пула дистанцисене кёскетни пирки пёлтерчёç. Анчах та çанталăк хăйённех турё: хăш-пёр йёлтёрçёсем финиша пит-куça шăнтса янипе çитрёç. Ун пеккисене кашнинех васкавлă пулăшу уйрăмён фельдшерё «кётсе илчё», самантрах пёрремёш пулăшу пачё.

Пёрремёш старт 12 сехетре пулчё: районти ертўçёсем йёлтёр йёрё çине тухрёç. Пуçланчё вара хёрў ăмăрту. Кашни пилёк-вунă минутран тёрлё ўсёмрисем старта тухрёç. Чи кёçённисен – 2001 çулта тата каярах çуралнисен стартне пăрахăçлама йышăнчёç. Вёсем те стадиона сахаллăнах пухăнманччё: вун пилёк ачана яхăн.

Кашни ўсёмре хăйсен çёнтерўçисем пулчёç. Ертўçёсенчен финиша чи малтан Н. Иванов («Герой» хуçалăх) тата О. Петрова (Атапайри тёп шкул) çитрёç, ёç коллективёсен йёлтёрçисенчен – М. Смирновăпа (ачасемпе çамрăксен спорт шкулё – «Сывлăх» ФСК) А. Иванов (Ильинкăри вăтам шкул). Ветерансем спорт ăмăртăвёсенче яланах ырă тёслёх кăтартаççё. Ку хутёнче те çаплах пулчё. 40-рен аслăраххисем – М. Николаева (А. Вязов ИП команди) тата Н. Скворцов (Çатракасси ял тăрăхё), 50-рен иртнисем – Т. Александровăпа С. Иванов – çёнтерўçёсем пулчёç.

Ёç коллективёсенчен Шалти ёçсен министерствин районти пайё çёнтерўçён кубокне тивёçрё. Вăтам шкулсенчен Калайкассисене çитекеннисем пулмарёç, тёп шкулсенчен Кашмашсем мала тухрёç. Ăмăртури кашни черетлё стартра çёнтернисене уйрăммăн палăртса чысларёç. Темёнле сивё пулсан та парнесем, медальсемпе дипломсем йёлтёрçёсен кăмăлне хăпартрёç.

«Эпир сивве çёнтертёмёр. Чăн та спорт уявё пулчё», – тесе стадиона пухăннисем киле хаваслă кăмăл-туйăмпа саланчёç.

Н. НИКОЛАЕВА.

Спорт афиши

Выляр-ха шашкăлла!

Спорт маçтăрён кандидачё, пилёк хут район чемпионё, «Урожай» обществăн республикăри икё хутчен чемпионё Александр Ёрмолаев юлашки çулсенче тăтăшах хăйён ячёпе шашкăлла выляканcен турнирне ирттерет. Кăçал та вăл февралён 19-мёшёнче, вырсарни кун, Йўçкассинчи Культура çуртне шашкăлла выляма кăмăллакансене вăй виçме чёнет. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

Кире пуканё çёклеме – Атапайне

Ыран, февралён 16-мёшёнче, Атапайри вёрентўпе культура центрёнче кире пуканё çёклессипе ăмăрту пулать. Ăна спорт маçтăрё пулнă Ю. Ковалева асăнса тата М. Музыков спорт маçтăрён кандидачён парнисене çёнсе илессишён ирттереççё. Ăмăртăва хутшăнма шкулта вёренекенсене йыхравлаççё. Категори виçисем çапла: арçын ачасем – 63, 68, 73, 78 кг тата ытларах, хёрсем – 60 кг е ытларах. Кире пуканён йывăрăшё 16 кг. Амăрту 11 сехетре пуçланать.

Хоккей вăй илсе пырать

Юнкăри, Муркашри вăтам шкулсенче тата Сыпайри тёп шкулта вёренекен арçын ачасенчен тăрать районти хоккеистсен пёрлештернё команди. Тёрлё ўсёмри арçын ачасемпе Р. Потаповпа А. Куликов, В. Михайлов, А. Шишкин тренерсем кунсерен тренировкăсем ирттереççё. Икё уйăха яхăн ёнтё вёсем тёрлё командăсемпе вăйăсем ирттерчёç: республика ăмăртăвён финалти выляканёсене зонăсенчи турнирсем палăртаççё-çке-ха. Çапла вара Муркашсем кўршё районсене те сахал мар тухса çўрерёç.

Ўсёмсем – куç умёнчех. Пёлтёр пирён район командисем – кёçён, вăтам тата аслă ушкăнсем – республикăра 5–6-мёш вырăнсенче пулнă пулсан кăçал виçё ушкăнё те малтисен ретёнче. Аслисем те, вăтам ушкăн та – 3-мёш вырăнсенче. Кёçён ушкăн вара иртнё эрне кун финал вăйăисенче 2-мёш вырăн çёнсе илме пултарчё. Тренерсемпе вёсен «хăравçă мар» воспитанникёсене çитёнўсемпе саламлатпăр. Мён çёнсе илни вара чикё ан пултăр.

Н. НИКОЛАЕВА.

Ёç выраннёсем пур, вёренме кайма та пулать

Шалти ёçсен министерствин Муркаш районёнчи пайё çамрăксене ёçлеме илет: 18–35 çулхисем, вăтам пёлў илни, çара кайма юрăхли пёлтерёшлё. Ёçе пёрпёр уголовлă ёç тёлёшпе айăпланнисене тата айăпланма пултаракансен йышёнче пулнисене, ытти тёрлё ёçсемпе судпа айăпланнисене илмеççё.

Çавăн пекех Раççейён Шалти ёçсен министерствин вёренў заведенийёсене «юрист» квалификаципе, «право сыхлавён ёç-хёлё» специальноçпа вёренме каяс текенсене йыхравлаççё.

Тёплёнрех çак номерпе шăнкăравламалла: 62-9-60 (шалти ёçсен пайёнчи 4-мёш пўлём).

Шалти ёçсен министерствин районти пайё.

Пёлтерўсем. Объявления

В консалтинговую компанию «Виктория» требуется бухгалтер (для работы в с. Моргауши). Требования: женщина до 40 лет, образование – высшее экономическое, знание «1 С бухгалтерия», опыт, ответственность, обучаемость. Обязанности: обслуживание клиентов. Режим работы: полный рабочий день. Заработная плата: 10 000 руб. Резюме на E-mail: vika09-2010@mail.ru. Факс: 8(8352)22-10-60. Контактный тел.: 446-448 (сот.). 1-5.

В с. Моргауши по ул. Гагарина, д. 10А (в здании старой музыкальной школы) с 8-00 до 17.00 час. начала работу швейная мастерская по пошиву и ремонту одежды, а также шьем на заказ трикотажные изделия для детей и взрослых. Тел.: 8-953-010-21-34.

* * *

Возьму в аренду торговую площадь для продажи обуви и одежды. На длительный срок, до 80 кв. м. Тел.: 8-961-345-90-43.

* * *

СПУТНИКОВОЕ ТВ от 3500 руб. Установка в короткие сроки, качество, гарантия, обслуживание. Тел.: 8-927-852-74-75. 1-2.

ЛЕСОПТОРГ реализует пиломатериалы:
Доски: 50х100, 50х150, 50х200, 25х100, 25х150, 25х200 – 1 куб. м. от 5000 руб. Изготовим сруб бани 3мх5м от 45000 руб. В наличии – сухие дрова. Доставка бесплатно от 10 куб. м.
Тел.: 8-919-665-11-88, 8-905-343-91-07. 12-24.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.

Ёнесем, вăкăр, тына, пăрусем, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 2-10.

ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» срочно требуются: механизаторы, операторы по обслуживанию оборудования, птичницы. Оплата сдельная и своевременная. Перевозка с близлежащих деревень осуществляется служебным автобусом. Тел.: 65-2-43, 65-2-47. 2-5.

«Агрокредит» информирует

С декабря 2011 г. в Моргаушском отделении КПКГ «Агрокредит» стартовали 2 новых ипотечных проекта - «Жилье по жеребьевке» и «Доступная ипотека». Эти программы уже сейчас стали востребованы не только молодым поколением, но и более старшим. Мы встретились с директором кооператива «Агрокредит» Константиновой Н. В.

Константинова Н. В.: В Моргаушском районе функционируют 8 микрофилиалов кооператива «Агрокредит», за прошлый год кредитный портфель организации увеличился на 3 млн руб., только за неделю выдается более 56 займов на общую сумму более 760 тыс. руб. С ноября 2010 г. мы начали активно работать с ипотечными кредитами с возможностью погашения материнским капиталом. На сегодняшний день более 1 000 семей приобрели собственное жилье благодаря этой программе. Но, как известно, сумма материнского капитала невелика, а получить дополнительный кредит в банке не у всех предоставляется возможным. Вот мы и запустили 2 новых ипотечных продукта, где можно получить один миллион рублей без справок и поручителей. Участвовать в них может каждый желающий, достигший 18 лет.

Программа «Жилье»: Для начала подается заявка на участие, вносится минимальный взнос 10 700 рублей. Каждый месяц проводится жеребьевка, где и определяется счастливый обладатель миллиона. Первая такая жеребьевка состоялась 17-го декабря 2011 года в г. Чебоксары. В ней приняли участие 13 пайщиков, сделавших первые взносы. Из посетивших это событие гостей трое сразу же изъявили желание поучаствовать в этом проекте. За месяц, пролетевший с момента первого розыгрыша, группа участников увеличилась до 20-ти человек. И вот уже сейчас есть второй обладатель миллиона. Стоит отметить, что процедура жеребьевки является полностью открытой, каждый присутствующий может лично проверить все номера участников, помещенные в барабан.

Программа «Доступная ипотека» (накопительно-заемная). Например, Вы планируете купить квартиру стоимостью 1 000 000 рублей. Для этого Вам надо накопить 500 000 рублей, чтобы получить займ в размере 500 000 рублей. У вас, предположим, есть 10 000 рублей. Вы приходите в наше отделение, заключаете договор сбережений на эту сумму на любой срок под 10% годовых. Далее копите еще 490 тысяч рублей удобными для Вас ежемесячными взносами, но не менее 1 000 руб. Как только сумма сбережений и начисляемых на них процентов составит 500 тысяч рублей, кооператив выдает Вам заем в размере 500 000 рублей под 14% годовых. И удача уже в руках!

Константинова Н. В.: Для более подробного разъяснения о работе этих программ мы решили провести встречу, которая состоится в с. Моргауши **17 февраля в 12.00 ч. в районном Доме культуры**. Подробную информацию вы сможете узнать у представителей КПКГ «Агрокредит» и по тел.: 62-8-13, 8-927-995-0341 или 8-800-200-9820 (звонок по России с любого телефона бесплатный).

Мы будем рады видеть Вас на встрече! Приглашаем всех желающих! Работаем с пайщиками.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:101102:63, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Ядабай, ул. Новая, д.8, для индивидуального жилищного строительства, площадью 3948 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:180202:97, местоположение: установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир ОМЗ-424. Участок находится примерно в 150 м от ориентира по направлению на северо-запад. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:061901:1276, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 77985 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070101:85, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5889 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
СБЕРЕЖЕНИЯ
• выгодные % ставки
ЗАЙМЫ
• На газификацию
• Пенсионный
• Ученье - свет
• Обручальное кольцо
• Юбилейный
• Мой малыш
• Все для ремонта
• На подсобное хозяйство
• Социальный
ЗАЙМЫ С ИСПОЛЬЗОВАНИЕМ МАТЕРИНСКОГО КАПИТАЛА
на покупку, строительство жилья, в том числе по долевому участию
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
62-6-86
8 900 333 0001
www.kpksodrugestvo.ru

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:030301:111, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д.Ойкасы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3127 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Кадастровый инженер Кольцов Алексей Валериевич, 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 8(83541)63-4-39. E-mail: Arshin21@yandex.ru, извещает участников долевой собственности СХПК «Герой» о согласовании проекта межевания (размера и местоположения границ выделяемого в счет земельных долей) земельных участков, расположенных по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, кадастровый номер 21:17:180701:1, с размерами и местоположением границ выделяемого в счет земельных долей земельных участков, можно ознакомиться в ООО «Аршин» по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, дом 41/5, по этому же адресу принимаются обоснованные возражения относительно размера и местоположения границ выделяемого в счет земельных долей земельных участков в письменной форме в течении тридцати дней со дня опубликования настоящего извещения.

Заказчики работ: Кондратьев Илья Кондратьевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Костеряки, ул. Главная, д. 5, Кондратьева Анфиса Герасимовна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Костеряки, ул. Главная, д. 5.

Прогноз погоды

	среда 15 февраля				четверг 16 февраля				пятница 17 февраля			
Местное время	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00
Облачность %												
Осадки мм												
Температура °С	-16	-15	-11	-13	-15	-15	-12	-17	-20	-20	-14	-19
Давление мм	754	751	750	750	752	752	753	754	756	755	756	756
Влажность %	86	86	69	83	94	89	69	74	83	80	67	72
Ветер м/сек	5	7	8	7	7	5	6	5	3	3	3	4
	Ю-В	Ю-В	Ю	Ю	Ю	Ю-В	Ю-В	Ю-В	Ю-В	Ю-В	Ю-В	Ю-В
Солнце восход / заход		08:18	17:55			08:16	17:57			08:13	17:59	
Луна восход / заход		03:21	10:56			04:30	11:47			05:25	12:51	
фаза												

Муркаш районёнчи «Çёнтерў ялавё» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерствин «Муркаш районён «Çёнтерў ялавё» хаçат редакцийё» автономи учрежденийё.

Тёп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тёп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайё - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайё - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2009 çулхи раштавăн 7-мёшёнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленё.

Калăпăшё 1,0 пичет листи.
Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççё.
Рекламăпа пёлтерўсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйё Николаева Н.Н.
Пичете панă 14.01.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4573.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерў ялавё», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.